44-69

ИВАН МАЛГАЙ

# Сăвăсем

☆

ЧĂВАШГОСИЗДАТ—1944
ШУПАШКАР

Инв. № 38 87

ИВАН МАЛГАЙ

# СĂВĂСЕМ

ЧĂВАШГОСИЗДАТ
ШУПАШКАР ■ 1944

Редактор С. Эльгер

НТ 00718. Подписано к печати 20/IX-44 г.
Объем 2,125 п. л. Тираж 2000 экз. Заказ 1255

г. Чебоксары, тип. № 1 Упр. Полиграфпромышленности при СНК ЧАССР

## ÇĔНТЕРӲ ЮРРИ

Вăрçă вучĕ хаярланчĕ.
Ял çунать, çунать хула.
Тăшман — выçă, урнă анчăк, —
Тулашать, сиксе улать,
Тăшман — выçă, урнă анчăк, —
Тĕп тăвасшăн халăха.

Пĕтереймĕн ирĕк халăха,
Вилĕм тупăн эс, тăшман, хăвах!

Пытарасшăн пире чĕррĕн
Çĕр айне, усал çĕлен.
Иртĕхесшĕн кунĕн-çĕрĕн,
Çаратасшăн çĕр питне.
Анчах, аслă Совет çĕрĕ
Фашистсемшĕн ешермен!

Пĕтереймĕн ирĕк халăха,
Вилĕм тупăн эс, тăшман, хăвах!

Эпĕр вирлĕн çапăç атпăр,
Хăрамастпăр вилĕшрен!
Эпĕр харсăр, эпĕр паттăр,
Пултаратпăр çĕнтерме,
Çĕнтерӳ юрри юрлатпăр
Хĕн чухне те чĕререн.

Пĕтерейĕмĕн ирĕк халăха,
Вилĕм тупăн эс, тăшман, хăвах!

Пире Сталин приказ пачĕ, —
Хушрĕ вăйлăн кĕрешме.
— Аслă халăхăн хăвачĕ
Çитет, — терĕ çĕнтерме.
Аслă Сталин приказ пачĕ
Тăшмана йăлт пĕтерме.

Пурнăçлатпăр Сталин приказне,
Тĕп тăватпăр фашистсен йăхне!

1942.

## ЁМĔР ПĔТМĔ АСЛĂ ХАЛĂХ

Кĕл те тĕтĕм, хура кăмрăк. Йывăççем те çунса хăрнă.
Нимĕç çаратса пĕтернĕ яла тулăн-шалăнах.

Çыннисем типсе шуралнă, пурте, пурте
ырханланнă.
Ах, ытла та пăхма йывăр! Ялта — кăмрăк,
кĕл кăна!

Мĕнле юлтăн шурă хурăн, — асаттеçĕм,
ватă хурăн?
Эсĕ çеç пĕччен ларатăн, пуçна уснă
кичемпе.
Мĕнле çирĕп хăват пулчĕ, саншăн пĕтĕм
вăйне хучĕ,
Кастармарĕ, çунтармарĕ, вĕçтермерĕ
тĕтĕмпе?

Пĕр киле те тĕкĕнмесĕр хăварман вĕсем
тивмесĕр,
Кашни утăм çĕр çинче тискер ĕçĕн
йĕрри пур.
Йытăсем кунта ташланă, такамран та
мăшкăланă, —
Çунатне сарса алхаснă урнă йытă пек
хĕнхур.

Пирĕн куç курать пурне те. Ку тискерлĕх
ĕмĕрне те
Каяс çук асран нихçан та. Тытĕç пурĕпĕр
ответ.

Ăçта эпĕр пурнăç тунă, ăçта юрă, кулă пулнă —
Çавăнта ылханлă вилĕм тăшмана кĕтсе илет.

Çĕнĕрен пирĕн пуянлăх ешĕрсе хăпарĕ анлăн.
Йывăççем те ӳссе ларĕç, ĕнтĕ ял-хамăр алра.
Сывă пултăр Совет çĕрĕ! Çиçтĕр вут-хĕвеллĕ ирĕ!
Хĕрлĕ Çар, сана мухтатпăр пĕтĕм ырă кăмăлран.

Ав танксем мĕнле кĕрлеççĕ,васкаса шуса иртеççĕ, —
Умлăн-хыçлăн тасатаççĕ пур тĕле те тăшманран.
Ĕмĕр пĕтмĕ аслă халăх, — çĕнтерӳллĕ ун хăвачĕ,
Пĕр çĕлен те чĕррĕн юлмĕ çак хаяр çапăçуран!

1943.

## ШĂПИ УНĂН ВИЛĔМ!

Урат, асать,
Асать, сикет,
Сикет, чикет,
Çынна çакать!

Вутта перет ачасене,
Вутта перет карчăксене.
Намăсланса тăмасть нимрен,
Тискер ун юнлă аллисем.
Сарса çӳрет тăшман тирпетсĕр
Хура та йăвăр çунатне,
Хура чаршав витесшĕн, сĕмсĕр,
Çӳлти хĕвелĕн çут питне.
Тĕнче хуçи пулса пурнасшăн
Мĕнпур сĕтеклĕ çĕр çинче,
Пире чура туса хурасшăн
Хура çуначĕ айĕнче.
Вăл ĕмĕр пирĕншĕн ылханлă,
Ылханлă, ирсĕр выç çăхан...
Эпир ăна пĕлетпĕр: кам вăл? —
Вăл нимĕç, йĕрĕнчĕк тăшман!

Яла ватать,
Пушар тăвать,
Юн юхтарать,
Кулса тăрать.
Вилен çынна
Пырса таптать, —
Чикет ăна,
Касса ваклать!

Юхма чарасшăн, типĕтесшĕн
Шăнкăртатса юхан шыва.
Пур пурлăха хăйне илесшĕн

Куçне-пуçне чарса шăвать.
Иăвăççене ӳсме чарасшăн,
Ёнтсе ярасшăн улăха.
Хĕн-хур айне туса хурасшăн
Тем чухлĕ ырă халăха.
Кайăксене чарса тăрасшăн
Хаваслă юрă юрлама.
Тĕнче мулне çăтса хыпасшăн,
Чура туса мĕнпур çынна.
Ăçта пырать — унта хăрушă,
Нихçан, никам курман ĕççем
Туса хурать. Çаплах урасшăн,
Кӳпесшĕн чĕрĕ юн ĕççе.
Вăл ĕмĕр пирĕншĕн — ылханлă,
Вăл выçă, ĕмĕр тăранман.
Эпир ăна пĕлетпĕр: кам вăл? —
Вăл ирсĕр, иртĕхнĕ тăшман!

Нихçан, никам
Илтмен, курман —
Палач, тиран,
Хура тăшман!
Урать, асать,
Асать, сикет,
Касать, чикет,
Çынна çакать!

Ултавлăн каçрĕ чикĕ урлă,
Бандит пек кĕчĕ çĕршыва.

Вӑл кӳчӗ тӗрлӗ асап-хурлӑх,
Вӑл пӑсрӗ мирлӗ пурнӑҫа.
Вӑл саранча пек йышлӑн килчӗ
Ҫӗршыв чӗри — Мускав ҫине,
Пур вӑйӗпе кӗме пикенчӗ
Пирӗн тӑван хула ӑшне.
Йытӑ кӗтӳ пек йышлӑн килчӗ
Сталинграда, Атӑл ҫине,
Пур вӑйӗпех вӑл ӗмӗтленчӗ
Хыпса ҫӑтасшӑн вӗсене.
Хаяррӑн, сиввӗн сиксе урчӗ
Сӗмсӗрлетсе пуҫтах пуҫне.
Ҫӗрпе сӗм пӗлӗт ҫунса тӑчӗ
Кӑвар тӑкса ялсем ҫине.
Эпир ӑна пӗлетпӗр: кам вӑл? —
Вӑл ирсӗр, иртӗхнӗ тӑшман!
Вӑл ӗмӗр пирӗншӗн — ылханлӑ,
Вӑл выҫӑ, ӗмӗр тӑранман.

Анчах, Мускав —
Ҫӗршыв чӗри,
Хӑват пулса —
Пулса вӗри,
Тӑшман ҫарне
Чарса лартса,
Ҫут ҫӑлтӑрне
Ялкӑштарса:

— Çук, — терĕ, — çук
Тăшманшăн çул!

Мускав хăватлă, çирĕп пулчĕ,
Фрица кĕртмерĕ алăкран.
Чарса тăратрĕ, çулне пӳлчĕ,
Кĕл турĕ ĕмĕтсĕр фрицран.
Кĕл пулчĕç ĕмĕрлĕх, пиншерĕн
Килекенсем Мускав патне.
Унта пĕри те кĕрейменрĕç,
Çухатрĕç пĕтĕм ĕмĕтне.
Тĕреклĕ, вăйлă, çирĕп пулчĕ
Атăл хулийĕ — Сталинград:
Чарса тăратрĕ, çулне пӳлчĕ, —
Шыв ĕçтермерĕ Атăлран:
Çулса тăкса вăл аркантарчĕ
Пырса капланнă тăшмана.
Сталинграда ӳкме памарĕ
Чакми хăватлă Хĕрлĕ Çар!
Юхмарĕ аслă Атăл уншăн
Илемлĕн, çуттăн хумханса,
Малашнехи килес ăрушăн
Вăл çатрĕ путсĕр тăшмана.

Тарать тăшман,
Чакать тăшман.
Тăшман сисет —
Ун вăй пĕтет.

Мала, мала,
Юлташăмсем!
Алла, алла
Автоматсем!

Салют парать Мускав мăнаçлăн,
Каç-каç кĕрлеççĕ туяăсем.
Çĕнтерӳсен чапне саламлăн
Итлеççĕ пĕтĕм çĕршывсем.
Татах та вирлĕн суламланчĕç
Украинăри çапăçусем.
Пирĕн хаярлăх кăварланчĕ
Вăй-хăватпа çирĕпленсе.
Çитес çĕре эпир çитетпĕр,
Пирте пĕр ĕмĕт — малалла!
Хамăр çĕре хамăр илетпĕр,
Памастпăр аскăн тăшмана.
Пирте вăй-хал вĕрет хăватлăн,
Çапсассăн — тимĕр татмалла.
Эпир татах та çĕнтерӳллĕ
Аçа та çиçĕм пулмалла!
Пире нумай çынсем кĕтеççĕ—
Тухасшăн мăшкăл-пусмăртан;
— Часрах çăлсамăр, килĕр! — теççĕ,
Куççуль тăкаççĕ хурлăхра.

Тăшман урать.
Урать, асать;

Асать, сикет,
Çынна чикет,
Çакса суллать,
Хĕн кăтартать!

Çитес çĕре эпир çитетпĕр,
Пирте пĕр ĕмĕт: — малалла!
Асаплă тăвансемĕр, кĕтĕр,
Çитетпĕрех сире çăлма,
Тăшман тĕп пулĕ, шăпи тулĕ.
Шăпи ун — вилĕмĕ кăна!
Çитет, çитет Совет хĕвелĕ
Сире те ăшшăн лăпкама!

1943.

## ФРИЦ CĂН-ÇĂПАЧĔ

Иле тискер, епле хăруш çĕлен!
Ун аллинче юнланнă çĕçĕ.
Пăхса тăрать усал куçĕпелен:
Паян хăй пуснă çын çинче ун куçĕ.

Кулса пăхать: кулли те кулă мар,
Шăлне йĕрсе пăрахнă çынçиенçĕ.
Ӳсĕр пуçпе вăл хатĕр юрлама.
Çынни выртать, тавра юнпа кӳлленнĕ.

Ачи йĕрет çурлас пек, кантăкран:
— Атте, атте, тăрсам! Тухасчĕ манăн?.

Пĕрех чупса тухасшăн алăкран,
Эсрелĕ питĕрнĕ, тухса тараймăн.

Ял хушшинчи кермен пек çĕн пӳртсем
Йĕркеçенех йăсăрланса çунаççĕ.
Тăшман аллийĕ-çке янă тивретсе...
Яла хуплать хура çăхан çуначĕ.

Ăçтан тӳсес çак путсĕр мăшкăла?!
Çак айăпсемшĕн кам ăна касарĕ?
Хуçать тискерлĕх пирĕн кăмăла!
Çапла асать-çке «фюрер» çарĕ.

1943.

## АМĂШĔН СĂМАХĔ

Вăрçă вучĕ хыпса илчĕ
Темиçе пин çухрăма.
Чикĕ урлă каçса килчĕ
Нимĕç путсĕр ĕç тума.
  Чикĕ урлă каçса килчĕç
  Çĕленсем шăва-шăва.
Çĕршыв чĕнчĕ, Сталин чĕнчĕ
Хĕçпăшал илме алла.
Аслă халăх кар! çĕкленчĕ
Тăшмансемпе çапăçма.

— Пирĕн ĕç вăл—тĕрĕс, тере,—
Çĕнтерÿ пирте пулать.
Виçĕ ывăл карĕ ĕнтĕ
Çапăçу хирне тухса;
Ашшĕне те кайма сĕнтĕм
Пĕтĕм çиллине пухса.
Виçĕ ывăл тата ашшĕ
Çапăçаççĕ халь унта.
Чуптуса вара пĕрерĕн
Алăкран ăсатнă чух:
„Çĕнтерсен—килетĕр, терĕм,—
Йышăнатăп... унсăр çук."
Вĕсем çирĕп тупа турĕç
Йышăнса ман сăмаха.
Кашни кун хурах тăшманăн
Халĕ пуçĕ татăлать.
Сахал мар вĕсем, нумайăн
Путрĕç пирĕн Атăла.
Пур çĕрте те тăшмана халь
Вилĕм çеç кĕтсе тăрать...
Виçĕ ывлăм, вĕсен ашшĕ
Паян вутлă вăрçăра
Арăслан пек çапăçаççĕ.
Эп ĕçлетĕп колхозра.
Пирĕн ĕç вăл—тĕрĕс ĕç вăл,
Çĕнтеретпĕр эпирех.

1943.

## ИЛСЕ КАРЁÇ ХЁРЕ...

Расскажи, далекая моя,
По какой дороге, у какого дерева
Русая головушка твоя,
Умная головушка потеряна?
*(М. Исаковский)*

— „Илсе карĕç хĕре, хăвармарĕç,
Илсе карĕç хĕре, çарамас, çаруран.
Ман чĕре кăвар пек çуннине ăнланмарĕç,
Мăшкăларĕç хĕре çав тери, хам умрах.

Çурăлать пуль чĕрем, мана йывăр, тăванăм,
Халиччен те курманччĕ кун пек мăшкăла.
Хăвăртрах вĕсене çиттĕр халăх ылханĕ,
Çиттĕр пирĕн ылхан çав тискер тăшмана!

Хуса çиттĕр часрах пирĕн харсăр хаярлăх.
Çул çинчех пуçне кайтăр касса, тураса!
Çынçиен, юнĕçен, çаратан тăшман çарĕ
Тĕп пулинччĕ часрах, вилĕм туптăр часрах!

Ах, чĕремçĕм, чĕрем çурăлать пуль,
вилетĕп,—
Пĕлĕте хуплакан сăрт-ту пек хуйхă ман!
Ĕнтĕ эп курас çук нихăçан, ĕмĕрне те
Чечек пек хĕрĕме,—илсе кайрĕ тăшман...

Савнӑ хӗрӗм—чӗрем, савнӑ хӗрӗм—
чӗкеҫӗм,
Пӗтрӗн пуль халиччен ҫӗленсен йӑвинче?
Тӗлӗкре хӑть курса ман ыйтасчӗ, пӗлесчӗ:
Мӗнле тухрӗ чуну, нимӗҫсен аллинче?!

1943.

## ТӐЛӐХ АЧА

Что вы творите, безумцы?
(*Феогнид*)

Амӗш вилнӗ, юн ҫинче выртать,
Ачи кӑкӑр патне кармашать,
Шӑнса кӳтнӗ аллине тӑсать те—
Тытаймасть вӑл, мӗскӗн, кӑшкӑрать.

Амӗш вилнӗ, юнӗ сирпӗнсе
Варалана ачан пит-куҫне,—
Кӑвакарнӑ пичӗ сӑнсӑрланнӑ,
Лӑпчӑнасшӑн амӑшӗ ҫумне!

Тӗссӗрленнӗ унӑн куҫӗсем,
Ҫуркаланнӑ ҫӳхе тутисем,
Алла тытрӑм: ҫук вӑл, тетӗп, вилмӗ...
— Мӗн тӑваттӑр эсир, ҫӗленсем?!

1943.

## КАРЧӐК КАЛАНИ

Икӗ йывӑҫ юнашар
Уссе ларнӑ тӗлтенех
Сиксе тухрӗ те пушар—
Хыпса илчӗ ҫуртсене.

Путсӗр нимӗҫ пӳрт ҫине
Хучӗ ирсӗр аллине,
Вара тепӗр ирчченех
Ялӑм ҫунчӗ тӗпренех...

Ҫӗр те ҫитмӗл киллӗ ял
Вӗҫсе кайрӗ кӗлпеле.
Ҫиллӗн пӑлханать вӑй-хал
Ку тискер инкекпеле.

Мана, ватӑ карчӑка,
Кӑшт пемерӗҫ вут ҫине.
Кӳрентерчӗҫ кӑмӑла,—
Халь те чунӑм ҫӳҫенет.

Тӳсрӗм, чӑтрӑм мӑшкӑла—
Хура йытӑ хурлӑхне.
Ҫирӗп пултӑм ҫав-ҫавах,
Каламарӑм ӑҫтине—
Партизансем, ял-йышсем.

Аскăн нимĕç пит усал,
Сиен кӳчĕ-çке нумай!
Пĕтрĕ пирĕн тăван ял,
Йывăр ăна асăнма.

Çитĕ вăхăт, çитĕ кун,—
Вилĕм килĕ тăшмана.
Шыв пек юхнă чĕрĕ юн
Хумхатать партизана.

Çынçиен хура çĕлен
Пĕтĕ ĕмĕтне татса.
Хĕрлĕ Çар ак пуçĕпех
Хуçĕ тăшмана çапса.
1943.

## ШУРĂ КĂВАКАРЧĂН

Шурăмпуç пек шурă кăвакарчăн
Танк çинех хăюллăн пырса ларчĕ.
Каллĕ-маллĕ утса пăхкалать,
Кăлтăр-кăлтăр туса тем калать.

Чĕлхи çук ун, калĕччĕ пурне те.
Эп ăна пĕлетĕп, хĕрхенетĕп.
Вăл юратнă капăр карниса,—
Ĕнтĕ нимĕç çунтарнă ватса.

Сар туталлӑ сарӑ чӗпписем те
Пулнӑ пулӗ. Ҫунчӗҫ пуль вӗсем те.
Пӗтнӗ ял, кӗл пулнӑ пӗтӗмпех.
Вӗҫсе кайнӑ пурлӑх тӗтӗмпе.

Ҫук никам,—ытла та хурлантарчӗ.
Хирӗҫ тухрӗ шурӑ кӑвакарчӑн.
Вӑл та хурлӑх курнӑн туйӑнать,
Каллӗ-маллӗ утса тем калать.

Кайӑка та эпӗр хӗрхенетпӗр,
Ачана шелленӗ пек шеллетпӗр.
Анчах хӗрхенместпӗр тӑшмана—
Шеллеместпӗр ҫӗлен-калтана.

Шурӑмпуҫ пек шурӑ кӑвакарчӑн
Танк ҫинех хӑюллӑн пырса ларчӗ.
Савӑнать пуль эпӗр килнӗрен.
Хурланать пуль йӑви пӗтнӗрен.

1943.

## ЧӐВАШ АЧИНЕ

Боец выртать, граната—аллинче,
Куҫне хупасшӑн та вӗҫсӗр ҫывӑрасшӑн.
Аманнӑ вӑл,—юн юхнӑ кӑкринчен.
Ывӑннипе тӑмасӑр ҫывӑрасшӑн.

Темскер калать пăшăлтатса хуллен,
Тути вылять,—сăмахĕсем тухмаççĕ.
Суранĕпе хăй сывлăхĕ çинчен
Пĕлесшĕн вăл,—сăмахĕсем тухмаççĕ.

Чăваш ачи, Чăваш çĕршывĕнчен—
Вăрнар вăрманĕ патĕнчи ялсем вăл,
Паян аманчĕ вăрçă хирĕнче—
Чун пек юлташăм, юнашар ялсем вăл.

Чăрсăрланса вут-çулăм ăшĕнче
Нимĕçсемпе кĕрешрĕ пирĕн паттăр.
Хаяр, юнлă вăрçă хирĕнче
Вунçич йытта пĕтерчĕ пирĕн паттăр.

Ак халь выртать, граната—аллинче
Татах тăрса çапăçăва кĕресшĕн.
Чĕри тапать аманнă кăкринче—
Татах, татах çапăçăва кĕресшĕн.

Пулмарĕ пуль, тăраймăн эс текех.
Чуну тухать, аран сывлан, юлташăм...
Сан вырăнна эпир те, сан пекех,
Тăшманпала кĕрешĕпĕр, юлташăм.

Хĕвел анса каç пулчĕ паçăрах.
Тавралăха хупларĕ çурхи шăплăх.
Фашист ĕнер алхаснă пахчара
Эпир кăна ларатпăр. Килчĕ шăплăх...

Юлашки хут сывланӑ юлташа
Ҫак пахчана хисеплӗн пытаратпӑр.
Ҫапӑҫура пуҫ хунӑ чӑваша
Мухтав сунса шав малалла утатпӑр.

1943.

## ЯЛАВ, ЯЛАВ...

Уяври пек шав, анчах та юрламаҫҫӗ;
Уяври пек шав,—хаваслӑх ҫынсенче.
Вӗҫет совет ялавӗ—урамсенче,
Унтах танксем хуллен, хуллен шӑваҫҫӗ.

Ӑҫта пӑхан унта—тӑшман вилли,
Чӑн ирӗкпе сывлать совет ялӗ,
Хӗн курчӗ вӑл асапланса ҫулталӑк,
Тек илтӗнмест кунта тӑшман кулли.

Унта-кунта йӑсӑрланать шур тӗтӗм,
Ҫавах паян хаваслӑх ҫынсенче.
Ялав, совет ялавӗ—урамсенче:
— Хӗрлӗ Ҫара манмастпӑр ӗмӗрте те!

1943.

## ШАНЧӐК ХАМӐРТА

Хурӑнсем шурӑ та капӑрччӗ,—
Ӳсрӗҫ пурте яштака...

Нимӗç килчӗ те çунтарчӗ,—
Вӗсем пулчӗç тунката.

Çук халь илемлӗх
Пахчара.
Хурӑнлӑх пулчӗ
Çап-çара.

Ирсерен шӑпчӑк ларатчӗ те
Хурӑн туратти çине
Ӑшшӑн, чаплӑн шӑрататчӗ
Хӑйӗн уçӑ юррине.

Хурӑнлӑх пулчӗ
Çап-çара.
Çук халь шӑпчӑк та
Пахчара.

Килхуçийӗ пит те ирӗклӗн
Хӑйӗн пысӑк çемйипе
Колхозра ӗçлетчӗ тимлӗн,
Мухтанатчӗ çӗн ӗçпе.

Çук халь никам та
Ку килте,
Нимӗç салатрӗ
Пӗтӗмпех.

Ачисене çакрĕ вăл, шелсĕр,
Урам хапхи умĕнче.
Амăшне те пĕр тивлетсĕр
Çунтарчĕç кăвар çинче.

Нимĕç салатрĕ
Пĕтĕмпех.
Çунчĕ кил-çурт та
Тĕппипех.

Килхуçи манмасăр таврĕ
Юнĕçен çĕленсене.
Партизан çилли—кăварĕ
Çитсе тивĕ вĕсене.

Çунĕç вĕсем те
Вут çинче.
Пĕттĕр çĕленшĕн
Çут тĕнче!

Савăнса татах та пурнăпăр
Колхозра та хулара,
Çĕнтерӳ ялавĕ пурĕпĕр
Пулĕ пирĕн алăрах!

Çутă хĕвелĕн
Çуттинче
Пулĕ илемлĕ
Çут тĕнче.

Хурăнсем, хĕрсем пек, капăррăн
Каллех ӳсĕç яштака;
Ирсерен шăпчăк пырса ларĕ,
Юрра ярĕ вăл татах.

Халĕ хăюллăн
Çапăçар.
Çаптăр сатуррăн
Хĕрлĕ Çар!

1943.

### ШУХĂШ

Анлă Атăл. Çăмăл кимĕ.
Симĕс улăх ик енче;
Çут хĕвел шевли вылятчĕ
Лăпкă, лăпкă хум çинче.

Ярăнса эпир çӳренĕ
Атăлта нумай, нумай.
— Чунăм, теттĕм, ылттăн, теттĕм,
Эпĕ хамăн тусăма.

Шухăш хыççăн шухăш килчĕ,
Тусăм тухрĕ куç умне.
«Çитĕ вăхăт, çитĕ, тетĕп,—
Пырса ларăп ун çумнех».

Ир те, каҫ та кӗтсе тӑтӑр,
Ан пӑрахтӑр вӑл мана.
Эпӗ пурӗпӗр ҫитетӗп,—
Тӗп тӑвар-ха тӑшмана!

Ав, пытанчӗ шурӑ уйӑх.
Каҫ. Каллех тӗттӗмлевет.
Кӗҫ эпир сиксе тӑратпӑр.
Ҫапӑҫу пире чӗнет.

## ПӖР ЁМӖТПЕ

Пӗр ёмӗтпе, пӗр шухӑшпа эпир
Пӗр ҫемье пек ялан та пурӑнатпӑр,
Чӗре тапать хӗрсе хӑть каҫ, хӑть ир,
Тӑван ҫӗршыв, сана чунран саватпӑр.

Ҫӗршывӑмӑр—тӑван атте-анне,
Ӑна хисеп кӳренҫӗ кӑмӑл ӑшӑ.
Ҫав кӑмӑлпа ҫӳретпӗр кулленех,
Ҫав кӑмӑлпа ырми кунсем шӑваҫҫӗ.

Ҫав кӑмӑлпа халь паттӑр боецсем
Атакӑна кӗреҫҫӗ пултаруллӑн;
Вилӗм умне тӑрсассӑн та вӗсем—
Ҫапӑҫура мухтавлӑ та хӑюллӑ.

Çав кӑмӑлпа тухаççӗ иртнисем—
Кашнин умне. Ĕçсем аса килеççӗ:
Кама—çулла, кама—тулли кӗрkунӗсем
Кама—тыр вырнисем аса килеççӗ.

Кама—итем, авӑн хӗрсе çапни,
Кама—вӑрман хитрен саралнӑ вӑхӑт.
Кама—чипер хӗрсем улах ларни,
Кама—завод, хӗрсе ӗçленӗ вӑхӑт.

Кама—тулли тӑп-тӑрӑ кӳлӗсем,
Кама—таçтан вырнаçнӑ симӗс улӑх,
Куç умӗнчех—тем тӗрлӗ чечексем,
Кам умӗнче—шывпа юханçӑ сулӑ.

Çӗршывӑмӑр, çӗршыв—атте-анне:
Шывсем, тусем, вӑрман, колхоз уй-хирӗ..
Сана паратӑп хамӑн чӗрене,
Мӗн пек илемлӗ эс, çӗршывӑмӑр пирӗн!

Кикак! кикакклатса хуркайӑксем
Картипеле иртни ансат-çке маншӑн.
Мухтавлӑ Пушкин çырнӑ сӑн-тӗссем
Ӑçта пулсан та ман умрах тӑраççӗ.

Утçи касне, çӗн утӑ шӑршине—
Лав хыççӑн лав пынисене саватӑп,

Хӗвел ансан шӑрчӑк чӑрлатнине
Нихҫан та эп, нихҫан та-ҫке манмастӑп.

Мана питех те, питӗ килӗшет
Ҫурхи ейӳ... Атӑл юхни тӳлеккӗн.
Пӑхса тӑрап эп: кимӗпе ишет
Пӗр пулӑҫӑ хуллен, каҫ пулнӑҫемӗн.

Колхозниксем пӗр харӑссӑн тухса
Ҫурхи ака тӑваҫҫӗ ӑмӑртуллӑн;
Шӑнкӑрч ларать йӑви ҫинче пӑхса,
Шӑрантарать хӑй юррине янравлӑн;

Шӑпӑртатса каҫ кӳлӗм хӑш чухне
Ҫума пуҫлать-и ӑшӑ ҫӑмӑр,
Ҫӗр каҫиччен ҫусассӑн, ир енне,
Тин чарӑнать вӑл—шӑпӑр-шӑпӑр...

Уй-хир кӑкри татах кӑпӑкланать.
Калчи шӑтать—кӗҫҫе пек, хулӑн, тикӗс;
Ӑна курса ман чун хавасланать.
Хире туртать, хире чӗнет-ҫке тинӗс...

Ҫӗршывӑмӑр—тӑван атте-анне,—
Ӑна хисеп кӳренҫӗ кӑмӑл ӑшӑ.
Ҫав кӑмӑлпа пурнатпӑр кулленех,
Ҫав кӑмӑлпа ырми кунсем шӑваҫҫӗ.

1943.

## ЭП САНА КАЛАТĂП...

*Сержанта,—тăван шăллăма.*

Эп сана калатăп: тăвана тăван
Ĕмĕрех хисеплĕ, манас çук нихçан,—
Хуть ăçта пулсан та çывăх вĕсен чунĕ,
Пурпĕрех тăванлăн ĕмĕт сиксе çунĕ;
Пĕр юнран çуралнă, пулнă пĕр ӳтрен,
Кулнă та вылянă, ӳснĕ пĕр пӳртре.

Эп сана калатăп: шăллăм, эсĕ, ман
Кăмăла пĕлетĕн, ĕмĕте чухлан;
Эп тăван çĕршывшăн, халăхшăн
пурнасшăн,—
Вĕсене ялан та усăллă пуласшăн.
Çавăнпа ӳстернĕ вăй парса пире
Манăçми аннеçĕм çакă тĕнчере.

Эп сана калатăп: çапăç хытăрах,
Тăшмансем тĕп пулччăр юлашки вутра!
Пирĕн ĕмĕте вăл—телее çĕмресшĕн,
Халăхăн хĕвеллĕ пурнăçне илесшĕн,
Антăхса алхасрĕ йытă çиллипе,
Урнăн ахăлтатрĕ ирсĕр куллипе.

Эп сана калатăп: паян мар, кĕçех
Çиллĕ çăмăр хыççăн шăплăх çитетех.
Çĕнтерӳ уявĕ, савăнăç уявĕ

Инçе мар, çитет вăл,—вĕлкĕшет ялавĕ.
Çĕнĕ ĕç пуçланĕ çĕршыв талккишпех,
Мăн савăнăç çитĕ пĕтĕм тĕнчипех.

1944.

## ТĂВАН ЯЛШĂН

Вăрман çумĕн, çырма тăрăх
Шыв юхать йăмралăхра.
Тăрна кусĕ пек тăп-тăрă
Йăлтăрать вăл улăхра.

Çавăнта вырнаçнă ялăм—
Улăх урлă тăсăлать.
Çитсе курăн-ха, юлташăм,
Тен эс çитĕн кăçалах.

Килĕшуллĕ чаплă вырăн,—
Вăйă, кулă çуркунне...
Çамрăксем юрланă юрă
Лăпланать çеç ир енне.

Çавăнта тухма хушаттăм
Çут хĕвел ансассăнах,—
Çавăнта çав тĕл пулаттăм
Вара хамăн тусăма.

Халь те, халь те асилетĕп
Çав илемлĕ вырăна.
Çапăçас-ха вирлĕн, тетĕп,
Вăл ан пултăр тăшмана!
1943.

## ÇАМРĂК ПОЭТА

Сталинградшăн
çапăçса пуçне хунă М. Ястрана.

Манмастăп эп: Атăл çине
Пăхса тăма эс юрататтăн,
Çурхи илемлĕ хумсене
Текех аснаттăн сăвăра та.

Лермонтова вуланăран,
Тăван çĕре савса хăватлăн,
Шупашкартан Кавказ таран —
Шухăшусем чупатчĕç санăн.

Манмастăп эп: Астраханьте
Шупка-кăвак каçсем пулатчĕç.
Çавăнпала та пирĕнте
Тулли поэзи те çунатчĕ.

Дагестанран тухсан, пĕрре
Пире Каçпи хытах силлерĕ,
Çавах лармарăн пÿлĕмре:
„Тинĕс санне сăнатăп" — терĕн.

Çыраттӑн çӗнӗ сӑвӑсем.
Сталин çинчен хыváттӑн юрӑ.
Тытаттӑн пысӑк ӗмӗтсем,
Калаттӑн: кирлӗ-ха культура...

Манмастӑп эп: поэт чӗри
Çӗршыв илемӗшӗн вӗретчӗ.
Çырас-ха халь, юнӑм вӗри;
Тӑван çӗршыв—анне ман,—теттӗн.

Анчах тӑшман, тискер тӑшман
Сан пурнӑçна хисепсӗр татрӗ,
Тӑван çӗршӗн эс пур вӑйран
Кӗрешрӗн, паттӑрлӑх кӑтартрӑн!

1943.

## ХӖРПЕ КАЧЧӐ

*(Эскиз)*

Çамрӑк мар ӗнтӗ ку каччӑ,
Авланма та вӑхӑт.
Кӳршӗ хӗрӗ юрататчӗ
Тахçанах ӑна вӗт.

Ашшӗ-амӗш вӗсене
Лайӑх пӗлнӗ туслине.

Ĕç çинче те, вăйăра та
Яланах пĕрлеччĕ:
Юрататни?—Юрататăп,—
Сăмах панă тетчĕç.

Хĕрпе каччăн туслăхне
Час пĕлет ял хăш чухне.

Çуллахи каçсем асамлă—
Ăшшăн тĕлĕреççĕ...
Çамрăксен вăййи хаваслă,
Саланать ирпе çеç.

Шăпланаççĕ шăпчăксем
Пĕр самантлăх тĕлĕрсе.

Анчах, пурпĕр туслă мăшăр
Юнашаррăн ларнă,
Хапхара та уйрăлмасăр
Темĕн чул каласнă.

Кӳршĕсем те пĕр хут мар
Курнă çакă мăшăра.

Маттур каччăпа чипер хĕр
Калама çук ăшшăн
Тӳремре шыв юхнă евĕр
Сăмахсем юхтарнă.

Хурлăхан пиçсе иртсессĕн,
Мăйăрсем тулаççĕ.
— Кĕç ман арăм пулăн эсĕ,—
Панă сăмах каччă.

Туй пулас куна текех
Кĕтнĕ каччăпа хĕр.
Чĕвĕлти чĕкеç пекех
Пурăннă пит шĕкĕр...

Пурнăç килчĕ урăхла—
Тухрĕ сиксе вăрçă.
Гитлер, вăрă-хурахла,
Ĕмĕте çунтарчĕ.

Шухăшланă вăхăтра
Туй пулмарĕ колхозра.

Каччă кайрĕ, вăрçа кайрĕ
Çапăçмашкăн çиллĕн.
Чипер хĕр ăна ăсатрĕ:
—Çапăç,—терĕ,—вирлĕн!

Çитĕн,—терĕ çаврăнса,
Вилмесен, герой пулса.

Улăп евĕр çапăç, терĕ,
Халăхшăн, çĕршывшăн.

Пĕттĕр ирсĕр Гитлер çарĕ,
Вилĕм пултăр уншăн!

Пирĕн каччă ответлерĕ:
— Çĕнтерсен килетĕп.
Пурте сывă пулăр,—терĕ,—
Çĕнмесĕр, килместĕп.

Каччă çук,—хĕр савнă каччă,
Вăхăт улшăнчĕ пачах.
Колхозри кунсем шăваççĕ
Ĕçпеле анчах.

Нихçанхи пек мар ударлăн
Колхоз тытăнчĕ ĕçе.
Фронтпала тыл пĕр каварлăн
Илчĕç пĕр ĕçех.

Ку ĕç тĕрĕс—пирĕн ĕç вăл:
Çĕнтерў çех пулмалла.
Тăшмана вĕри кăварлăн
Çунтарса тĕп тумалла.

Ашкăнаççĕ çĕленсем
Калама çук иртĕхсе.

Эрне хыççăн эрне иртрĕ.
Çыру килчĕ каччăран.

—„Эпӗ,—тенӗ,—ӗнтӗ ҫитрӗм:
Халь хӗрӳллӗ вӑрҫӑра.

Ҫапӑҫатпӑр, тенӗ, вирлӗн,
Пултаруллӑн яланах.
Тӑшмана ҫӗршер-ҫӗршерӗн
Пӗтеретпӗр куҫӑнах".

Хӗр патне те, колхоза та
Ҫыру ҫырчӗ пирӗн каччӑ:
„Эпӗ паттӑр ҫапӑҫатӑп,
—Пурте паттӑр ҫапӑҫаҫҫӗ".

Хӗр ҫырать, ҫырать ответ
Колхозран пӗр вӗҫӗм:
Начар мар ӗҫлетпӗр, тет,
Тусӑмҫӑм, чӗремҫӗм.

Ир пулать те каҫ пулать,
Сивӗ хӗл ҫывхарчӗ.
Вӑрҫӑ вучӗ ялкӑшать,
Ой, хӗрӳллӗ вӑрҫӑ!

Ал тӑсать Мускав ҫинех
Юн ӗҫевҫӗ Гитлер.
Талпӑнать вӑл пикенсех
Йытӑ питлӗ Гитлер.

Чăтаймарĕ колхоз хĕрĕ
Чăрсăр кăмăлĕпеле:
„Эп вăрçа каятăп, терĕ,
Мускав хĕрĕ—Зоя пек“.

Хăй çырса вăл ыйту пачĕ,
Военком патне кĕрсе:
„Вăрçăра ман савнă каччă,
Эпĕ те каяп...“ тесе.

Военком ăна итлерĕ:
— Пултаратăн, терĕ.
Ӳссе çитнĕ колхоз хĕрĕ—
Боец пулăн, терĕ.

Ял-йышне вăл ал парса
Тухса кайрĕ вут вăрçа...

* * *

Паян кун та çапăçаççĕ
Хĕрпе каччă вăрçăра.
Колхозра тек асăнаççĕ
Çак хастарлă мăшăра.

Каччин кăкăрĕ çинче
Çуталать халь орден.

Хӗрӗн кӑкӑрӗ ҫинче—
„За отвагу" пур, тет.

Тӑшмана тӗп тусанах
Вӗсем килӗҫ колхоза.

Иккӗш икӗ ҫулпала
Ҫаврӑнса ҫитсессӗн,
Мирлӗ, лӑпкӑ пурнӑҫра
Туй та пулӗ селӗм.

1943.

## ХӖЛ ҪИТНИШӖН ПӐШӐРХАНМӐН ЭСӖ

Хӗл ҫитнишӗн пӑшӑрханмӑн эсӗ,
Уру шӑнмӗ хаяр сивӗре.
Пӗлтӗр туртнӑ шур автан йӗтесӗ
Халь те манӑн выртать ҫӳпҫере.

Эпӗ ҫыхрӑм чӑлха икӗ мӑшӑр,
Арласа шурӑ сурӑх ҫӑмне.
Ӑҫтан чӑтӑп сана пулӑшмасӑр,
Паттӑра—Хӗрлӗ Ҫар ывӑлне.

Ҫывхарса ҫитнӗҫем пӗтес кунӗ
Тӑшмансем туллашаҫҫӗ хытрах.
Ҫавӑнпа калап, тусӑмҫӑм, чунӑм,
Ҫапӑҫэс, пул хӑюллӑ вутра!

194

## ШУХӐШЛАНӐРАН ПУЛЬ...

Тусӑма эп куртӑм кӗҫӗр тӗлӗкре:
Кайӑк пек вӗҫет вӑл ҫӳллӗ пӗлӗтре,
Кӗрлесе пырать ҫеҫ пысӑк самолӗчӗ—
Тусӑмӑн юратнӑ ывӑнми хӑлачӗ.
Кӑшкӑртӑм:—савниҫӗм!—карӑм вӑранса,
Тусӑмҫӑм вӗҫет пек пурпӗр ярӑнса.

Шухӑшланӑран пуль, терӗм хама хам—
Тӗлӗкре эп куртӑм кӗҫӗр тусӑма.
Анчах эп пӗлетӗп чӑнахах вӗҫет вӑл:
Унӑн самолӗчӗ пысӑк та хӑватлӑ.
Кӑшкӑрӑп: савниҫӗм!—вӑхӑчӗ ҫитсен,
Чӑнахах вӑл килӗ тӑшмансем пӗтсен!

1943.

## ЭП КӖТЕП ҪЫРУ...

Арсений Д—ва

Чӑннипех калатӑп: уҫӑ ҫырӑвна
Тек-текех вулатӑп, асилсе сана.
Тантӑшӑм, юлташӑм, пултаруллӑ каччӑ,
Тӑрӑ куҫусем сан ман умрах тӑраҫҫӗ.
Юлашки ҫыру ку. Эп кӗтеп татах...
Письмоносец килӗ, кӗрӗ ман патах.

Пӗртте эс ҫухалнӑн туйӑнмасть мана,
Тек-текех вулатӑп уҫӑ ҫырӑвна.

Юлашки ҫыру ку—юлашки ан пултăр,
Килтĕр письмоносец, ҫырусем хăвартăр.
Тантăшăм, юлташăм, вăхăт шав иртет,—
Курăпăр, тĕл пулăпăр, ĕмĕт пирĕнте.

Хурлăхан та пиҫĕ, хĕрелĕ пилеш,
Вăхăт шав иртет ав,—ах, курас килет.
Эсĕ килессе-ҫке эп чунран кĕтетĕп,
Таврăнтăр вăл паллă паттăр пулса, тетĕп.
Ҫиттĕрччĕ ҫав вăхăт, ҫиттĕр хăвăртрах,
Тăшмансем тĕп пулччăр хаяр ҫулăмра.

1943.

## ЛЕСНИК АРĂМĔ

Вăрманта утсан вăраххăн
Телефонлă ҫул енне,
Ҫитсе кĕтĕмĕр лесникĕн
Пиллĕк кантăклă пӳртне.

Хĕвел анчĕ, тĕттĕмленчĕ.
Тулти сивĕ пӳртре ҫук.
Ăшăпа куҫсем ҫемҫелчĕҫ.
Ăйхă пусать кун пек чух.

Анчах:—Тăхтăр, чей ĕҫетпĕр,—
Терĕ те пире инке,
Сăмавар лартса вĕретрĕ,—
Хăналасшăн кирлĕ пек.

Ăйхă карĕ сирĕлсе.
Чей ĕçетпĕр калаçса:
— Ывăлу сан миçере?
— Январте икке кайса...

— Упăшку вăрçа кайса-тăр?
— Вилчĕ пĕлтĕр вăрçăра.
— Халь вара миçен пурнатăр?
— Ывăлпа иксĕмĕрех.

Урăх нимĕн те чĕнмерĕ
Нумайччен вара инке.
Апат-çимĕç хатĕрлерĕ,
Çемçетмерĕ кăмăлне.

Çинĕ хыççăн вăл васкавлăн
Пухрĕ чашăк-тирĕкне.
Хăналарĕ тараватлăн,
Палăртмарĕ хуйхине.

Ачине çеç питĕ хыттăн
Ыталарĕ чуптуса;
Калаçмарĕ умлăн-хыçлăн
Хурланса е кулянса.

Çирĕп чунлă ку хĕрарăм,
Пурнăçа вăл ăнланать.
Тен, куççуль те вăл юхтарнă,—
Халь ак малалла пăхать.

Хĕн-хурпа асаплăх хыççăн
Пурпĕр çăмăллăх çитет.
Çил те вĕрĕ унчух уççăн,
Пурнăç çуталса килет.

Хурланни вăл—кăмăл чирĕ,
Инке хăтăлнă унтан.
Çавăнпа инкенĕн çирĕп
Çамрăк кăмăлĕ паян.

Апатлантăмăр пит селĕм,
Селĕм пулчĕ вĕри чей.
Хăналантăмăр хисеплĕн
Çак лесникĕн пӳртĕнче.

Хырăм тутă—вăхăт ирĕк,
Вырăн сарнă çывăрма,
Сывă пултăр февраль ирĕ!
Эпир хатĕр ир тăма.

1943.

## ПИРĔН АННЕ

Калап сире: анне ман куççăр,
Анчах, вăл куçлă чунĕпе.
Ахаль лармашкăн чăтаймасăр
Чăлха çыхать ал сĕмĕпех.

Хăш-чух урать-и кĕрхи каçĕ,
Шăхрать-и çилĕ мăръере,
Йăмăкăмсем туйми çывраççĕ,
Аннем çыхать чăлха пĕрех.

„Фронтра-çке ман юратнă ывăлăм,
Ан шăнччăр унăн урисем.
Часрах чăлха чиксе ярасшăн,
Çыхатăп ыйăха сирсе.

Фронтра ун çывăх тусĕсем те,
Ан шăнччăр çамрăк урисем,
Темскер пек йăвăрлăх килсен те
Хăюллă пулччăр,—теп,—вĕсем".

Шăвать васкавлăн каçхи вăхăт,
Анне выртмасть-ха çывăрма.
Алли ĕçлет ун питĕ хăвăрт,—
Çыхасшăн вăл мăшăр чăлха.

Ĕçлет çаплах, тӳсет ун чунĕ,
Чĕри ун çирĕп ĕлĕкрен;
Ачаранпах вăл—ĕçшĕн çуннă,
Ĕçе юратнă ĕмĕрех.

1943.

V

## ХĔЛ КАÇĔ

Шăппăн килсе шăплăх кӳчĕ хĕл каçĕ,
Шăппăн, хуллен шурă уйăх хăпарчĕ.
Çамрăк инке, салтак арăмĕ, кӳршĕ
Çутрĕ те лампă – çуталчĕ ун пӳрчĕ.
Çутă тухмасть урама пурпĕрех,
Кантăксене карчĕ вăл пĕтĕмпех.

Шăппăн килсе шăплăх кӳчĕ хĕл каçĕ.
Вăхăт шăвать. Ачисем çывăраççĕ.
Çамрăк инке, салтак арăмĕ, кӳршĕ
Вăрçă хирне, инçете çыру çырчĕ:
„Тусăм, тăванăм, манми упăшкам,
Сывă эпир, чиперех Илюшпа.

Шăппăн килсе шăплăх кӳчĕ хĕл каçĕ.
Сивĕ тулта. Çăлтăрсем йăлкăшаççĕ.
Лăпкăн çыврать, пирĕн ывăл Илюша.
Эс ан кулян упăшкаçăм, тархасшăн.
Çапах та ан ман пĕр самант та пире.
Çапăç, кĕреш, тăшманпа вирлĕрех!

Шăппăн килсе шăплăх кӳчĕ хĕл каçĕ.
Манăн пуçра шухăшсем халь чупаççĕ
Тусăм, тăванăм, ывăлăм ашшĕ,—
Эсĕ çĕршывшăн та пирĕншĕн çапăç!
Пирĕн телей çутă пултăр ялан!
Тусăм, асту: кĕлпе çунтăр тăшман!“

## УСРАВ АЧА

Сарă çÿçлĕ, кăвак куçлă
Шухă, пĕчĕк ачана
Кĕрсе çитрĕ те хаваслăх
Халь вылять те савăнать.

Чи малтан вăл ир те, каç та
Пулчĕ хурлăхлă, кичем.
Шухă, пĕчĕк чипер Настя
Тек шутлатчĕ кил çинчен.

Кантăкран хăпа пĕлместчĕ,
Урамрахчĕ куçĕсем.
— Ăçта манăн анне?—тетчĕ.
— Ма ямаççĕ нимĕçсем?

Сывласа илетчĕ вăрăм,
Анаслатчĕ тек-текех.
Вылярма тăрсан—хаяррăн
Калаçатчĕ пирĕнпе.

Кунсем иртрĕç умлăн-хыçлăн,
Эрне иртрĕ чиперех.
Усрав хĕр—ача мăнаçлăн
Çывăх хăнăхрĕ пире.

Ашшĕне те, амăшне те
Тупрĕ пирĕн ăш пÿртре.

Аттене—«атте»—тет ĕнтĕ,
Аннепе çӳрет пĕрлех.

Халь вылять, кулать хăюллăн,
Халь хаваслă кун каçах.
Юрлать Настя пултаруллăн,
Чăвашла та калаçать.

Украина хĕрачи вăл,
Кăçал пусрĕ пиллĕке.
Ăна амĕш тунă чăпăл
Аслă Днепр шывĕпе.

Çавăнпа пуль куçĕ тăрă,
Днепр шывĕ пек таса.
Çемçе, сарă çӳçĕ вăрăм,—
Кăлкан, тетпĕр мухтаса.

Сехет тăрăх ӳснĕ евĕр
Ӳсет пирĕн хĕрача.
Ылттăн, тетпĕр, Настя, тетпĕр,
Кӳреңтермĕпĕр пачах.

Тăван амăшĕпе ашшĕ
Пĕтнĕ нимĕç куллинче.
Кăвак çӳçлĕ ват аслашшĕ
Çуннă хăйĕн килĕнчех.

Путсĕр нимĕç, путсĕр йытă,
Ним сăлтавсăр, кăлăхах

Урӑм-сурӑм урчӗ хытӑ
Шеллемерӗ халӑха.

Шеллемерӗ Гитлер мурӗ
Никама та ҫӗр ҫинче,
Темӗн чухлӗ тӑлӑх турӗ
Чечек пек ачасенчен.

Ӑна уншӑн кам каҫарӗ,
Кам ылханмӗ чӗререн?
Пӗттӗр, ҫунтӑр нимӗҫ ҫарӗ,
Кӗччӗр пурӗш те ҫӗре!

Кул, выля чипер хӗр, Настя,
Пул хаваслӑ яланах!
Урӑх нимӗҫ нихӑҫан та
Килмӗ. Вилӗм—халь ӑна!

Тӑван мар анну, аҫу та.
Анчах чыслӑ эс питрех.
Ҫӑлтӑру сан пулӗ ҫутӑ,
Кул та чуп халь ӑш пӳртре!

Каҫсерен эс ҫывӑран-ха
Лӑпкӑн, лӑпкӑн тӗлленсех.
Анчах пирӗн воинсем халь
Ҫывӑрмаҫҫӗ—тӗлӗреҫ.

Украина ҫӗршывне те,
Сирӗн аслӑ Днепра

Тасатаççӗ халӗ ӗнтӗ
Çынçиенçӗ тăшманран.

Ӳссе çитӗн те эс пӗлӗн
Çӗнтерӳçӗсен ятне.
Тӗлӗнсе унчух хисеплӗн
Хӗрлӗ Çарăн хăватне.

1943.

## ЯЛТИ ПИСЬМОНОСЕЦ

Вăрçă вăхăчӗ. Пӗлетпӗр
Письмоносецăн ӗçне.
Кашниех çыру кӗтетпӗр
Тӳсеймесӗр хăш чухне.

Хăшӗн пичӗш, хăшӗн аппӗ,
Хăшӗн ывăлӗ фронтра...
Кашниех пӗлсе тăрасшăн
Çыру тăрăх ăш хыпар.

Çутă сăнлă, çăлтăр куçлă,
Ӳрӗк чунлă сар хӗре
Кашниех кӗтеççӗ чыслăн—
Сăран сумкăллăскере.

Кантăка пырас тесессӗн—
Унăн кантăк уçăлать.

Алăкран кĕрес тесессĕн—
Уншăн алăк уçăлать.

Ир пулать-и, каç пулать-и,—
Çыру килчĕ-тĕк хăвна,
Савăнсах илсе вулатăн
Хăвна килнĕ çырăвна.

Вăркăнса çулатни утă,
Е пулатăн вырмара,—
Пурпĕрех сана тупать вăл,
Пуç тайсах çыру парать.

Хаçатра паян мĕн çырнă,
Радио мĕскер калать,—
Пур хыпар та унăн урлă
Саланать ялан яла.

Çамрăккипе—çамрăкла вăл,
Ваттисемпе—ватă пек.
Калаçать, кулать тăванлăн
Çепĕç шăпчăк сассипе.

Çутă сăнлă, çăлтăр куçлă,
Урĕк чунлă сар хĕре—
Кашниех кĕтеççĕ чыслăн
Сăран сумкăллăскере.

Вăрçă вăхăчĕ. Пĕлетпĕр
Письмоносец тивĕçне.
Ăна пурте хисеплетпĕр,—
Пуринчен ытла ĕçне.

1943.

## ĂСАТУ

*(М. Грудницкая майлă)*

Капăрлатрăм тусăма, капăрлатрăм,—
Инçе çула паян ир эп ăсатрăм,—
Инçе çула кайрĕ вăл
Çапăçма.
Пĕтеретпĕр пурĕпĕр
Тăшмана.

Капăрлатрăм тусăма, капăрлатрăм,
Ĕмĕр, ĕмĕр юратма сăмах тытрăм.
— Тен татах та курăпăр?
— Курмаллах.
— Пĕр ĕçре те пулăпăр?
— Пулмаллах.

Капăрлатрăм тусăма, капăрлатрăм.
Шурă çĕлĕкĕ çине çăлтăр лартрăм:
— Çăлтăрĕ çуталтăр ун
Йăлкăшса.

Яшлăх, çамрăклăх хăвачĕ
Комсомолпала ялан,
Пур çĕрте те малта пычĕ.
Тав—ăна! Хĕрӳ салам!

Паян кун та унăн ячĕ
Çăлтăр пек çунса тăрать.
Яшлăх, çамрăклăх хăвачĕ
Таптăр, сиктĕр хытăрах!

Малалли—килес ăрушăн
Вут ăшне чăмса кĕрсе,
Фашистсен пуçне çурасшăн
Вутлăн çапăçать хĕрсе.

Тăшман пĕттĕр, çунса кайтăр,
Çĕрсе вантăр çакăнтах.
Комсомол, пул эсĕ—паттăр,
Пул ялан та эс малта.

Хĕрĕх пуçлă çĕленрен те
Хĕрĕх хут тискер тăшман;
Анчах темле хĕн килсен те,
Комсомол, эс парăнман.

Çаҫал мар эпир пĕлетпĕр —
Пирĕн улăп çамрăксем,
Тăшман умĕнче сикмесĕр
Илчĕç вилĕмсĕр ятсем.

Çӗнтерӳ илсе тухасшӑн
Çӗнтерсе çӗленсене,
Аслӑ Сталиншӑн, Çӗршывшӑн
Пачӗç паттӑр пурнӑçне.

Ман çӗршыв—сӳнми çӑлкуçӗ.
Ман çӗршыв—сӳнми хӑват.
Ӑна халӑхсен Çулпуçӗ—
Аслӑ Сталин вӑй парать.

Çав вӑйпа—хӑюллӑ Таня
(Зоя пулнӑ чӑн ятпа)
Виличчен çаплах мухтаннӑ
Çӗршывпа та Мускавпа.

Тӳрӗ чунлӑ комсомолка,
Мускав хӗрӗ, партизан—
Нихӑçан та, нихӑçан та
Тухас çук пирӗн асран.

Пилӗк çамрӑк—пилӗк паттӑр,—
Украина каччисем!
Вӗсене те шав мухтатпӑр,
Вӗсем—вилӗмсӗр ятсем.

Пилӗк паттӑрӑн пӗр туслӑх
Çунса тӑнӑ шӗл кӑвар пек,
Вӗсем çирӗп ушкӑн пулнӑ:
„Молодая гвардия".

Тăшмана çĕнтертĕр вăл
Çапăçса.

Капăрлатрăм тусăма, капăрлатрăм,
Маттур, çирĕп аллине чăмăртарăм.
Кĕç хĕвел тухатчĕ!
Ой, кĕçех!
— Чик, вакла эс, тусăмçăм,
Нимĕçе!

1944.

## ПАТТĂР КОМСОМОЛ

(*Вăл 25 çул тултарнă куна*)

Ман çĕршыв—сӳнми çăлкуçĕ,
Ман çĕршыв—сӳнми хăват,
Ăна халăхăн Çулпуçĕ—
Аслă Сталин вăй парать.

Çав вăйпа эпир ӳсетпĕр,
Çав вăйпа хĕвел хĕртет.
Пур çĕрте те, пур çĕрте те
Çав вăйпа çĕршыв вĕрет.

Çав вăйпа ялан та яшлăх
Çиçрĕ пирĕн чĕрере.
Хĕрӳ çамрăклăх, хаваслăх
Лăн çĕнтерчĕ ĕçре.

Çав вăйпа-çке чăмăртаннă
Комсомол—кăвар чĕре.
Мĕнчул çамрăк ăс туптанă
Çав вăйпа вĕренӳре.

Вăл ӳстерчĕ, çитĕнтерчĕ
Темĕн чухлĕ паттăра.
Темĕн чухлĕ çĕнтерӳçĕ
Туса пачĕ çĕршыва.

Ман çĕршыв—сӳнми çăлкуçĕ,
Ман çĕршыв—сӳнми хăват,
Ăна халăхсен Çулпуçĕ—
Аслă Сталин вăй парать.

Çав вăйпа телейлĕ пурнăç
Килчĕ шуçăм пек шуса.
Хамăр туна, хамăр курнă,
Эпир ырă пурнăçа.

Çав вăйпа çĕклерĕ халăх
Хăйĕн чыслă тивĕçне,
Юмахра пулман пуласлăх
Килсе тăчĕ ун умне.

Çĕр çинче те, сывлăшра та,
Уй-хирте, вăрмансенче
Харсăр çамрăклăх шăратрĕ
Юрăсем çĕршыв çинчен.

Виличчен алран ямасăр
Комсомолăн ялавне,
Тăшманпа кĕрешнĕ харсăр—
Çĕклесе çĕршыв ятне.

Ман çĕршыв сӳнми çăлкуçĕ.
Ман çĕршыв—сӳнми хăват.
Ăна халăхсен Çулпуçĕ —
Аслă Сталин вăй парать.

Çав вăйпа мухтавлă воин,
Арăслан пек—вăрçăра.
Комсомол ӳстернĕ воин
Тăшмана çапать, ватать!

Разведка пĕччен каять-и
Хăш чухне тăшман тылне,—
Çав вăйпа боец сывлать те,
Пурнăçлать хăйĕн ĕçне.

Хăпарать-и ăмăрткайăк
Тăшмана çӳлтен ишме,—
Пултаруллă çав вăйпа вăл,
Пултарать вăрçма, вĕçме.

Комсомол пăхса ӳстернĕ
Çамрăксен кăкри çинче
Ахаль мар çап-çутă орден
Йăлкăшать хĕвелпеле.

Пур чухне те, пур ёҫре те—
Малта паттăр комсомол.
Пур ҫĕрте те эп илтетĕп:
Комсомол—пĕтми вăй-хал!

Паян кун татах вăл ҫирĕп,
Паян кун татах вĕри:
Ҫулăмра ҫунса каҫ-ирĕн
Талпăнса тапать чĕри.

Колхозра-и, заводра-и,
Е вăл вăрҫă хирĕнче,—
Комсомол ӳстернĕ паттăр
Чи ответлă ĕҫ ҫинче.

Пултаруллăн та хăюллăн
Яланах малта тăрса,
Аслă Сталиншăн, Ҫĕршывшăн
Пуҫ хурать кирлех пулсан.

Ман ҫĕршыв—сӳнми ҫăлкуҫĕ,
Ман ҫĕршыв—сӳнми хăват.
Ăна халăхсен Ҫулпуҫĕ—
Аслă Сталин вăй парать.

Ҫав вăйпа эпир ҫĕнтернĕ
Вăр-хурах тăшмансене,
Пĕр хут мар тĕпрен пĕтернĕ,
Вилĕм кӳнĕ вĕсене.

Çав вăйпа халь кунĕн-çĕрĕн
Урнă нимĕçĕн çарне
Темиçе çĕршер, пиншерĕн
Пĕтеретпĕр вĕлерсе.

Çав вăйпа халь Днепр урлă
Эпир кайрăмăр каçса.
Пĕр канмасăр хăвалатпăр
Тăшмана чиксе, касса.

Комсомол ўстернĕ паттăр
Çапăçать, вĕрет кунта.
Çĕнĕрен ятсем куратпăр,
Çĕнĕ геройсем унта...

Эс ўстернĕ, çитĕнтернĕ,
Эс вĕрентнĕ паттăрсем
Пĕр хут мар чыс ячĕ илнĕ
Шĕл кăвар çине кĕрсе.

Çак хĕрўллĕ вăрçăран та
Вĕсем тухмĕç чапсăрах.
Фашистсемшĕн вилĕм янтă.
Вилĕм—вĕсене йăлтах!

1943

## ЯНРАВЛĂ ЮРĂ

Янравлă юрă, çелĕм ю ,
Ан кичемлен эс, ан х лан,
Сана çăхан çуначĕ ах
Хуплаймĕ хурлă пусмăрпа.

Хăватлă, шухă Днепр урлă
Çĕмĕрттерсе каçсан эпир,
Эс тĕтĕм витĕр хирĕç тухрăн,
Ылттăн Украина юрри.

Сана манман кунта никам та.
Эс тăнă ĕмĕт пек çунса.
Тăшманшăн вилĕм пулнă—янтă,
Сана усранă чысласа.

Янравлă юрă, çелĕм юрă,
Ан кичемлен эс, ан хурлан,
Сана çăхан çуначĕ урăх
Хуплаймĕ хурлă пусмăрпа.

Юхса эс тăрăн çăршыв тăрăх
Илемлĕ Днепр юххи пек,
Хуласемпе ялсем юхтарĕç
Сана халь ĕмĕр-ĕмĕрех.

Каллех, каллех янра эс, юрă,
Тулли те уçă кăмăлпа.
Сана çăхан çуначĕ урăх
Хуплаймĕ хурлă пусмăрпа!

1943.

## СУД ПЫРАТЬ

Çаксем алхаснă иртĕнсе,
Çаксем вĕлернĕ çынсене,
Çаксем çӳренĕ сирпĕнсе,
Çаксем çунтарнă çуртсене,—
Алхаснă пирĕн çĕр çинче.

Çаксем—асап кӳрекенсем,
Çаксем—çынна çиекенсем,
Çаксем—чи выçă çăхансем,
Çаксем—юна ĕçекенсем
Тăраççĕ сиввĕн пуç пĕксе.

Çаксем, чечек пек ӳсекен
Кăкăр ачисене персе—
Пуçĕсене çуракансем,
Аллисене татакансем,
Суд умĕнче тăраç кичем!

Тем чухлĕ халăх. Суд пырать,—
Айăплисем çирĕп алра.
Ĕнтĕ тараймĕç. Суд пырать,—
Вĕсен тискер ĕçне уçать.
Тем чухлĕ халăх залăра.

Çӳç-пуç тăрать те вирелле,
Чун ыратса ванса каять.
Темрен те пысăк çил килет!
Тăратăн вут çинчи пекех,
Çунать хаярлăх чĕрере.

Пирĕн боецсене çакни,
Пирĕн боецсене касни,
Пирĕн боецсене ватни,
Ахăлтатса мăшкăлани—
Чĕре патне кĕрет манми.

Пĕчик ачанăн амăшне
Намăс ĕçпе пусмăрлани,
Ачи вилес пек макăрни,
Хăй амăшне ыталани,—
Тухать хăрушшăн куç умне.

Тарăн шăтăк тĕпĕсенче
Çынсем тискеррĕн кăшкăрни,

Пурнăç пама тархаслани,
Тӳсме çукран çӳçне туртни—
Тăраççĕ куçăм умĕнчех.

Çынсем çунни, çынсем вилни,—
Çынсен ӳтне йытăсем çини,
Çынсен куçне çăхан чавни,—
Мĕнчул тискер ĕçсем кунта—
Тăшман алхаснă вырăнта!

Тĕнче илтмен, тĕнче курман
Ун пеккине хальччен нихçан...
Нимле истори те илтмен
Кун пек тискер ĕçсем çинчен.
Çаксем кăтартрĕç, ирсĕрсем!

Çаксен мĕнпур усал ĕçне
Шута илсе, виççе пăхсан—
Миçе витре куççуль тухса,
Миçе витре-ши юн юхса,
Типсе çухалнă çĕр çинче!

Халь суд пырать. Йытăсене
Хаяррăн халăх суд тăвать,
Вĕсен тискер ĕçĕсене
Тĕпрен илсе уçса парать.
Тискер çĕлен ответ тытать.

Халь суд пырать. Тӑшман тӑрать
Ответ тытса пирӗн умра.
Гитлер йытти—вӑрӑ-хурах
Вӗреймӗ урӑх харлатса,
Кулаймӗ урӑх халӑхран!

Кӗтет халь вилӗм ҫак йытта.
Чи йывӑр айӑп умӗнче
Тӑрать вӑл хӑраса, хытса,
Туять вӑл йывӑр айӑпран
Каҫарас ҫук ӑна тӗнче.

Шӑпи ҫапла вӗсен кашнин,
Шалчи тулса пырать кашнин.
Вилӗм умне тӑрать кашни,
Хӑй айӑпне курать кашни.
Ответ тытӗҫ судра кашни!

Халь суд пырать. Каҫару ҫук!
Йӗрӗнчӗксем ҫирӗп алра.
Кашнин умне тухать пӗр ҫул.
Пӗр ҫул, пӗр тивӗҫ—урӑх ҫук,—
Ылханлӑ вилӗм ҫеҫ—пӗр ҫул.

Ҫук каҫару—палачсене!
Ҫук каҫару—тирансене!
Ҫук каҫару—ҫӑхансене!
Ҫук каҫару—ҫӗленсене!
Пурне те вилӗм вӗсене!

Çаксем илсе мухтав та тав
Çынна çиен Гитлертан.
Çаксем шутланă çав: Мускав,
Пирĕн тăван хула Мускав
Пулать тесе-çке хамăрта.

Çаксем аркатнă Харькова,
Çаксем Полтава хулинче
Ирсĕр ĕçсем туса шавах
Сиксе çÿренĕ иртĕнсе,
Таптанă пирĕн çĕршыва!

Халь суд пырать. Эпир ăна
Тăватпăр çак хаяр суда.
Мĕнпур тăванлă халăхпа
Чи йывăр, пысăк ылханпа
Тăватпăр суд халь тăшмана!

Кашни совет çыннин чĕри
Çаксен тискер ĕçĕсене
Итленĕçемĕн, çав тери
Хаярланать. Пулать вĕри
Асап кÿрен тăшмансене.

Халь суд пырать. Вăхăт çитет,—
Тăшманăн вилĕмĕ килет.
Кашнин кунçулĕ кĕскелет
Çаксен халь. Пурнăçĕ пĕтет,
Тимĕр карта та хĕсĕнет!

Шăпи çапла вĕсен кашнин,
Шалчи тулса пырать кашнин,
Вилĕм умне тăрать кашни.
Суд умĕнче пулать кашни.
Вилĕм, вилĕм кĕтет кашни!

Эпир çуралнă пурăнма,
Эпир пурнатпăр çĕр çинче.
Эпир çуралнă савăнма
Илем кӳрсе çак çĕр çинче.
Чура пулман, пулас та çук.
1943

## ЭПИР ÇĔНТЕРЕТПĔР

Юлашки хут тăшман урать хаяррăн,
Юлашки хут урать.
Хастар боец, нихçан та эс манмарăн
Çавна çапăçура.

Приказ парсан атакăна каймашкăн—
Чăрсăрлансах чăман.
Мĕнпур вăйна хурса тăван çĕршывшăн
Çĕнтерӳпе тухан.

Çут пĕлĕте хуплана вăрçă вучĕ
Çунать-ха хĕмленсех.
Нумай тĕле тăшман чĕр мăшкăл хучĕ
Ултавпала килсе.

Пиншер сынна хăварчĕ килсĕр-çуртсăр,
Хăварчĕ хурлăха.
Уй-хирсене таптарĕ те вăл путсĕр,—
Çаратрĕ пурлăха.

Çак мăшкăла тўсмешкĕн пире йывăр,
Вăл—тавăрма хушать.
Анчах эпир çапах та ак сывă,—
Çĕршыв хастар сывлать.

Пирĕн алсем тĕреклĕ хурçă евĕр,—
Маттур пирĕн алсем.
Хĕвелпеле тăрса тухса ĕçлетпĕр,
Ĕçре—пирĕн алсем.

Хамăр алпа хамăр валли ялан та
Телей тунă эпир;
Тăшман кăна шырать—ăçта мĕн янтă,
Ăçта тырпуллă хир?

Хастар боец, ан ман çакна, ан парăн,
Эс çапăç улăпла!
Юлашки хут йытă урать хаяррăн,—
Кĕçех шалçи тулать.

Ăçта куран, ăçта эс тĕл пулатăн
Вĕлер ăна, вĕлер!..
Мĕнпур вăйпа, урусемпе тапта та,
Çавăрса çап çĕре!

Пĕр шăтăкра, пĕр кĕтесре те ирсĕр
Ан юлтăр пытанса!
Вĕсем мĕн пурĕ тасалса пĕтмесĕр
Тăмастпăр чарăнса.

Тăшман ватса, кăмрăк туса хăварнă
Вырăнсенче тепре—
Вĕри вăйпа каллех, каллех хăпарĕ
Хĕрӳ ĕç çĕнĕрен!

1943

## МАНАС ÇУК ЭС ĂНА

Пушă мар, çăмăл мар çав салтакăн хутаçĕ,
Пĕтĕм пурлăх пырать хăвпала яланах;
Сан çирен уртăнса вăл çӳрерĕ пулсассăн —
Ĕмĕрне те, нихçан манас çук эс ăна.

Похода кайнă чух, вăрăм çул утнă хыççăн,
Паллă мар çырмаран шыв ĕçсе савăнан;
Шăрăхра, сивĕре йăвăр тӳсрĕн пулсассăн —
Ĕмĕрне те, нихçан манас çук эс ăна.

Шăхăрса, ӳлесе çил вĕрет кассăн-кассăн,
Вăл сана та лăскать, вĕçтерет ыйхуна.
Кĕрхи каç окопра выртса куртăн
пулсассăн—
Ĕмĕрне те, нихçан манас çук эс ăна.

Питĕ паллă, кĕске — командирăн приказĕ:
Тухмалла çĕкленсе çĕмĕрме тăшмана.
Малтанхи çапăçу хăруш пулчĕ пулсассăн—
Ĕмĕрне те, нихçан манас çук эс ăна.

Ахăрса алхасать урнă йытă хаяррăн,
Пĕтересшĕнччĕ вăл сан тăван халăхна.
Ун тискер ĕçĕпе чуну кўтрĕ пулсассăн —
Ĕмĕрне те, нихçан манас çук эс ăна.

Çавăнпа çапăçу хирĕнчен те тухмастăн,
Паян кун та хĕрсе, паттăрла çапăçан.
Сахал мар нимĕçсен пуçне татрăн
пулсассăн —
Ĕмĕрне те, нихçан манас çук эс ăна.

Çитес кун çитетех: пирĕн халăх хавассăн
Çĕнтерў Уявне уявлать, савăнать.
Эс ăна манас çук пуçу сывă пулсассăн —
Ĕмĕрне те, нихçан манас çук эс ăна.

Çĕнĕрен çĕкленсе хĕвел хăвăрт тухсассăн,
Çĕр суранĕ иртет, ерипен юсанать.
Вăл сана ўстерсе хăват пачĕ пулсассăн —
Ĕмĕрне те, нихçан манас çук эс ăна!

1944

## ТУПМАЛЛИ

Стр.

Çĕнтерӳ юрри . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Емĕр пĕтмĕ аслă халăх . . . . . . . . . . . 4
Шăпи унăн—вилĕм . . . . . . . . . . . . . 6
Фриц сăн-сăпачĕ . . . . . . . . . . . . . . 12
Амăшĕн сăмахĕ . . . . . . . . . . . . . . . 13
Илсе карĕç хĕре . . . . . . . . . . . . . . 15
Тăлăх ача . . . . . . . . . . . . . . . . . 16
Карчăк калани . . . . . . . . . . . . . . . 17
Шурă кăвакарчăн . . . . . . . . . . . . . 18
Чăваш ачине . . . . . . . . . . . . . . . . 19
Ялав, ялав . . . . . . . . . . . . . . . . 21
Шанчăк хамăрта . . . . . . . . . . . . . . —
Шухăш . . . . . . . . . . . . . . . . . . 24
Пĕр ĕмĕтпе . . . . . . . . . . . . . . . . 25
Эп сана калатăп . . . . . . . . . . . . . 28
Тăван ялшăн . . . . . . . . . . . . . . . 29
Çамрăк поэта . . . . . . . . . . . . . . . 30
Хĕрпе каччă . . . . . . . . . . . . . . . . 31
Хĕл çитнишĕн пăшăрханмăн эсĕ . . . . . . . 37
Шухăшланăран пуль . . . . . . . . . . . . 38
Эп кĕтеп çыру . . . . . . . . . . . . . . . —

Лесник арӑмӗ . . . . . . . . . . .
Пирӗн анне . . . . . . . . . . . . . . . . . 41
Хӗл касӗ . . . . . . . . . . . . . . . . . . 43
Усрав ача . . . . . . . . . . . . . . . . . 44
Ялти письмоносец . . . . . . . . . . . . . 47
Ӑсату . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 49
Паттӑр комсомол . . . . . . . . . . . . . 50
Янравлӑ юрӑ . . . . . . . . . . . . . . . 57
Суд пырать . . . . . . . . . . . . . . . . 58
Элир сӗнтерӗтпӗр . . . . . . . . . . . . 63
Манас сук эс ӑна . . . . . . . . . . . . . 65

Цена 4 руб.

*ИВАН МАЛГАЙ*

# СТИХИ

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ—1944
Чебоксары